25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1942
ИЮНЬ
9
ЫТЛАРИКУН
132(6067) №

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ҫуракинче пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе тата лайӑх пахалӑхпа ӗҫленӗшӗн, ВКП(б) райкомӗсемпе ӗҫҫынни депутачӗсен районсенчи Совечӗсен исполкомӗсем тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыраканӗсен республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

79. **Алексей Матвеевич Козлов** — Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуркуннехи ӗҫсен планне майӑн 20-мӗш тӗлне 132,3 процент тултарнӑ, 184 килограмм горючи перекетленӗ.

80. **Тимофей Петрович Бардасов** — Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл ҫуркуннехи ӗҫсен планне майӑн 20-мӗш тӗлне 131 процент тултарнӑ, 200 килограмм горючи перекетленӗ.

81. **Семен Игнатьевич Иванов** — Ишлей МТС-ӗнчи тракторист. Вӑл МТС-ра отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнчен аманса килнӗ хыҫҫӑн ӗҫлеме тытӑннӑ. У—2 маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл майӑн 20-мӗш тӗлне ҫуркуннехи ӗҫсен планне 109,7 процент тултарнӑ, 48 килограмм горючи перекетленӗ.

82. Кувакино МТС-ӗнчи **тракторсен бригади** (бригадирӗ Григорий Андреевич Юдин юлташ). Юдин юлташӑн бригади планра кӑтартса панӑ нормӑна 110 процента ҫити тултарса пырать, лайӑх ӗҫленӗшӗн бригадӑна МТС-ӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне панӑ. Бригадӑри трактористкӑсем — **К. И. Пчелякова, А. П. Сусленкова** юлташсем фронтри пек ӗҫлеҫҫӗ.

83. **Федор Васильевич Нежнов** — Кувакино МТС-ӗнчи тракторист. СТЗ маркӑллӑ трактор ҫумне 24 ӗретлӗ сеялка кӑкарса ӗҫлесе, вӑл сменӑра 29 гектара ҫити акнӑ, сменӑри нормӑна 190 процента ҫити тултарса пынӑ.

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн хӗрарӑмсен трактор бригадисемпе, хӗрарӑм-трактористкӑсен ӑмӑртӑвне ертсе пырас тӗлӗшпе тунӑ комиссийӗ тӑратнӑ тӑрӑх, ялхуҫалӑхӗнче малта пыраканӗсен республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

84. **Анастасия Евдокимова** — Йӗпреҫ МТС-ӗнчи трактористка. Вӑл, У—2 маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, ҫурхи ӗҫсен планне 8 сменӑра пурнӑҫа кӗртнӗ. Ҫемҫе суха ҫине куҫарса шутласан, вӑл, мӗнпурӗ 43,8 гектар сухаланӑ, плана 159 процент тултарнӑ.

85. **Анна Алексеева**—Тӑвай МТС-ӗнчи трактористка. Урапаллӑ СХТЗ маркӑллӑ тракторпа ӗҫлесе, вӑл 10 сменӑра 72 гектар сухаланӑ, план—55 гектар. Ҫурхи ӗҫсен планне вӑл 130 процент тултарнӑ.

Утӑ ҫулма хатӗрленсе ӑна пухса кӗртесси ҫинчен тата выльӑхсем валли сӗтеклӗ апат хатӗрлесси ҫинчен

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ постановлени

Ҫакна палӑртас: утӑ ҫулса кӗрес ӗҫе вӑхӑтра туса ирттерни тата силос хывса хӑварни отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче государствӑшӑн уйрӑмӑнах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать, мӗншӗн тесен халӗ утӑ колхозсен нумай йышлӑ выльӑх-чӗрлӗхне валли ҫеҫ мар, тата Хӗрлӗ Ҫара парса тӑма та кирлӗ. Ҫакӑ вара парти тата ҫӗрӗҫ органӗсене, МТС-семпе колхозсене утӑ ҫулса кӗрес тата силос хывса хӑварас ӗҫе кӑтартуллӑн хатӗрленсе туса ирттерме хушать.

Анчах ВКП(б) райкомӗсем, райсоветсен исполкомӗсем тата колхозсем нумайӗшӗ ҫакна шута илмеҫҫӗ. Утӑ пухса кӗме тата силос хывма хатӗрленес тӗлӗшпе уйрӑм районсем пачах ҫителӗксӗр ӗҫленине ҫакӑнпа ҫеҫ ӑнлантарса пама пулать. Республикӑри нумай колхозсем утӑ пухса кӗмелли машинӑсене тата вак-тӗвек инвентарьсене юсаса ҫитермен, ҫавӑн пекех тата МТС-семпе колхозсен тимӗрҫӗ лаҫҫисенче утӑ пухса кӗмелли машинӑсем валли ҫӗнӗ чаҫсем тӑвас тата кивӗ чаҫсене юсаса усӑ курас ӗҫе организацилемен. Колхозсенче утӑ пухса кӗрес тата машинӑсене юсас ӗҫсен планӗсене туса хатӗрлемен, силос шӑтӑкӗсене чавса е юсаса хатӗрлессине организацилемен, улӑхсемпе ҫарансене ҫителӗксӗр сыхласа тӑраҫҫӗ.

ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫапла йышӑнать:

1. Наркомзема (Малов юлташа), ВКП(б) райкомӗсен секретарӗсене, райсовет исполкомӗсен председателӗсене, МТС директорӗсене тата колхозсен председателӗсене ҫапла тума хушас: утӑ пухмалли машинӑсене, ҫавасене тата вак-тӗвек инвентарьсене юсас ӗҫе, силос шӑтӑкӗсене чавас е юсас ӗҫе кӑҫалхи июлӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр вӗҫлемелле. Ҫак срокпа ҫыхӑнтарса, утӑ пухмалли машинӑсемпе ытти инвентарьсене юсас тӗлӗшпе задани туса хатӗрлесе ӑна кашни МТС тата кашни колхоз патне ҫитермелле, ӑна пурнӑҫа кӗртнине ҫирӗппӗн тӗрӗслесе тӑмалла, ремонт пахалӑхӗ ҫине уйрӑмӑнах ҫавӑрӑнса пӑхмалла.

2. Райкомсен секретарӗсене, райсовет исполкомӗсен председателӗсене, МТС директорӗсене тата колхозсен председателӗсене иртнӗ ҫулти йӑнӑшсем кӑҫал пулмалла марри ҫинчен асӑрхаттарас. Пӗлтӗр уйрӑм колхозсенче утта вӑхӑтра ҫулса кӗмен тата вӑхӑтра силос хывман пирки курӑксем хӑрса кайма пуҫланӑ, ҫапла вара утӑ пахалӑхӗ тата унӑн тухӑҫлӑхӗ чакнӑ, тепӗр енчен утта капана хывасси ӑна ҫулассинчен нумай кая юлса пынӑ.

3. Утӑ пухса кӗрес тата силос хывас ӗҫе хӑвӑртлатас шутпа, ВКП(б) райкомӗсемпе райсоветсен исполкомӗсене ҫапла тума хушас: утӑ пухса кӗрес тата силос хывас ӗҫе СССР Совнаркомӗпе ЦК ВКП(б) йышӑннӑ решени тӑрӑх хуласенче мобилизациленӗ халӑха, шкул ачисене, ҫавӑн пекех тата выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен колхозниксене явӑҫтармалла.

4. Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсене 1942 ҫулти июлӗн 10-мӗш тӗлне акмасӑр ӳсекен курӑксене пухса ирттерех силос хывса хӑвармалли плана пурнӑҫа кӗртмелле тума хушас. Силос хывас ӗҫе вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа туса ирттерес шутпа, плана палӑртнӑ срокра пурнӑҫламалла тӑвас шутпа, колхоз хирӗсенчи, вырӑнти вӑрмансемпе государство вӑрманӗсенчи акмасӑр ӳсекен курӑксемпе пӗтӗмпех усӑ курмалла. Силоса малтанах хатӗрленӗ шӑтӑксемпе траншейӑсене хывмалла, вӗсене обязательно витсе хӑвармалла, ӑна тума вырӑнти материалсемпе усӑ курмалла.

Колхозсен акмасӑр ӳсекен курӑксене пухса ирттерех силос хывса хӑвармалли планӗ силос хывмалли пӗтӗм планӑн 70 процентӗ чухлӗ пулмалла тӑвас.

5. ВКП(б) райкомӗсене «Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ валли выльӑх апачӗ хатӗрлес тӗлӗшпе тумалли мерӑсем ҫинчен» СССР Совнаркомӗ 1941 ҫулти майӑн 29-мӗшӗнче йышӑннӑ постановление колхозсенче мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслеме тата ҫав постановление пур колхозсенче те пурнӑҫа кӗртмелле тума хушас.

6. ВКП(б) райкомӗсемпе колхозсен правленийӗсене утӑ пухса кӗнӗ вӑхӑтра пӗрлешсе апатланас ӗҫе тата хирти стансенчи культурӑллӑ ӗҫе организацилеме хушас.

7. Тырпул тухӑҫлӑхне ӳстернӗшӗн хушса тӳлесси ҫинчен СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ йышӑннӑ постановленипе килӗшӳллӗн, колхоз бригадисене, акса тунӑ курӑксен тухӑҫлӑхне ӳстермелли, улӑхсенчи курӑксемпе тымарҫимӗҫсен тухӑҫлӑхне ӳстермелли плана бригадӑна ҫирӗплетсе панӑ ҫӗр ҫинче ирттерсе тултарнӑшӑн ҫав культурӑсен планран ирттерсе пухса кӗнӗ хисепӗн виҫҫӗмӗш пайне памалла тӑвас.

8. Колхоз правленийӗсене ҫапла тума хушас: панӑ обязательствӑсене пурнӑҫа кӗртес шутпа, утта ҫулса пуҫтарнӑ хыҫҫӑнах, капана хывиччен хатӗрлев пункчӗсене турттарса тухас ӗҫе организацилемелле, ҫакна тума колхозниксене уйӑрса вӗсене кирлӗ чухлӗ лашасем памалла, ҫав колхозниксене ертсе пыма колхозран пӗр ответлӑ ҫын уйӑрса хумалла.

9. ВЛКСМ Обкомне ҫапла тума хушас: комсомолецсемпе союзра тӑман ҫамрӑксем утӑ пухса кӗме тата силос хывма хатӗрленес тата вӑл ӗҫсене туса ирттерес тӗлӗшпе активлӑн ӗҫлеччӗр.

10. ВКП(б) райкомӗсене тата МТС-семпе совхозсен политотделӗсене ҫапла тума хушас: утӑ пухса кӗмелли машинӑсене срокчен юсаса ҫитерессишӗн, утӑ пухса кӗртес тата силос хывас ӗҫе кӑтартуллӑн туса ирттерессишӗн социализмла ӑмӑртса ӗҫлессине анлӑн организацилемелле.

ВКП(б) Обкомӗн секретарӗ
ЧАРЫКОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Июнӗн 7-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Июнӗн 7-мӗшӗнче фронтӑн хӑшпӗр участокӗсенче вырӑнти ҫапӑҫусем тата разведка отрячӗсен активлӑ ӗҫӗсем пулса пынӑ.

Фронтӑн Севастополь участокӗнче виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ вӑйллӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Противникӑн атакисене ӑна пысӑк ҫухату кӳрсе сире-сире яраҫҫӗ.

Иртнӗ эрнере, майӑн 31-мӗшӗнчен пуҫласа июнӗн 6-мӗшне ҫитиччен, нимӗҫсен 528 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинчех пирӗн 151 самолет пӗтнӗ.

* * *

Июнӗн 6-мӗшӗнче пирӗн авиацин чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 10 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 60 автомашинине, 3 зенитнӑй орудине, 4 паровозне пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 1 батарейине пусарса лартнӑ. Противникӑн пехотине 3 ротӑна ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Евдокимов юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем (Ҫурҫӗр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) противникӑн атакине сирсе янӑ та, ҫиҫӗм пек хӑвӑрт пырса ҫапса, танксем пулӑшнипе нимӗҫсене халӑх пурӑнакан икӗ пунктран хӑваласа кӑларнӑ. Противникӑн 2 батальонне, вӑл шутра нимӗҫсем Данире пухнӑ авантюристсен своднӑй «добровольчески легионне» аркатса тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Пиунов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаҫри боецсем (Калинин фрончӗ) юлашки кунсем хушшинче противника хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 700 ҫынна ытла вӗлерсе тӑкнӑ.

* * *

Брянск фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн боецсем противникӑнне 3 станковӑй пулемет, 3 миномет, 40 пин патрон, 3.500 мина, продовольстви тата ялала склачӗсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур. Ҫапӑҫу хирӗнче гитлеровецсен 450 вилли выртса юлнӑ.

* * *

Пирӗн артиллери чаҫӗ, Тихомиров юлташ командир пулса ертсе пынипе, пӗр уйӑх хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 16 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрнӗ, 20 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ, артиллерин 2 батарейине тата минометсен 4 батарейине пусарса лартнӑ, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынран кая мар пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград партизанӗсем, В. юлташ командир пулса ертсе пынипе, пӗр уйӑх хушшинче оккупантсене 2.000 ҫынна ҫити вӗлернӗ, нимӗҫсен 18 танкне, 2 бронемашинине пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен 6 складне, горючин 4 складне сирпӗнтерсе янӑ, чугунҫул кӗперне йӑтӑнтарса антарнӑ тата противникӑн 4 эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ.

* * *

Финсен 8-мӗш пехотнӑй полкӗнчен Хӗрлӗ Ҫар енне каҫнӑ салтак П. ҫапла каласа панӑ: «Эпӗ ҫичӗ уйӑх хушши 50-мӗш пехотнӑй полкра пултӑм. Пӗрре пирӗн полкри 3-мӗш батальон наступление кайма килӗшмерӗ те хӑй йышӑнса тӑракан позицисене ирӗк памасӑрах пӑрахса хӑварчӗ. Ҫакӑн пирки полка ҫывӑхри тыла кӑларса кайрӗҫ те салтаксем хушшинче арестсем турӗҫ. Декабрь уйӑхӗнче полк фронта тухса кайма приказ илни паллӑ пулчӗ. Ҫав хыпара пӗлсенех 100 салтак ытла тарса ҫухалчӗҫ. Вӗсем, малашне хӑйсене мӗн кирлӗ пулма пултарнине асӑрхаса, хӑйсемпе пӗрле продовольстви тата хӗҫпӑшал илсе кайнӑ. Ҫак ӗҫ хыҫҫӑн 50-мӗш полка, шанчӑксӑр полк вырӑнне хурса, салатса ячӗҫ. Мана малти позицире тӑракан 8-мӗш полка ячӗҫ. Апрель уйӑхӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче вырӑссем пире вӑйлӑн пыра-пыра ҫапрӗҫ. Вӗсем 1-мӗш ротӑна пӗтӗмпех пӗтерсе пӑрахрӗҫ, унӑн мӗнпур хӗҫпӑшалне йӑлтах тытса илчӗҫ. Фронтра эпӗ ҫӗр ҫинчен советсен темиҫе листовкине илтӗм те тыткӑна парӑннӑ чух кӑтартма тесе пытарса хутӑм. Часах мана разведкӑна ячӗҫ. Эпӗ пӗле тӑркачах разведка ушкӑнӗнчен каярах юлтӑм та Хӗрлӗ Ҫар енне каҫрӑм».

* * *

Нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсем хӑйсем тытса илнӗ ҫӗршывсенчи халӑхсене пӗтерсе тӑкма хӑтланаҫҫӗ. Ҫак юлашки кунсене кӑна илсен те вӗсем Чехословакире 300 ҫынна ытла, пурӑнакан вырӑнта прописка тӗлӗшпе тумалли правилӑсене пӑхӑнман тесе, персе пӑрахнӑ. Плоцкран (Польша) инҫе мар ларакан поляксен ялӗнче нимӗҫсем гитлерла офицера тӗл пулнӑ чухне ҫӗлӗкӗсене хывманшӑн 6 хресчене вӗлернӗ. Кӳршӗри яла нимӗҫсем тӗппипех ҫунтарса янӑ. Ҫакӑн пек тискерле хӑтланнин сӑлтавӗ ҫакӑ пулнӑ: 3 хресчен Германие ирӗксӗр ӗҫе кайма килӗшмен.

Июнӗн 8-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Июнӗн 8-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле фронтра паллӑ улшӑнусемех пулман. Фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче разведка тӑвакан отрядсен активлӑ ӗҫӗсем пулса иртнӗ.

* * *

Ленинград фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн часть противника чылай пысӑк сиен кӳнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 500 вилли ытла выртса юлнӑ. Пирӗннисем радиостанци, 4 пулемет, 2 миномет, 150 винтовка, патронсем тытса илнӗ.

* * *

Пирӗн пӗр чаҫӑн артиллерисчӗсем (Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗ) противникӑн артиллерин икӗ батарейине тата минометсен 4 батарейине, 3 пулеметне, 8 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата 160 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ.

* * *

Калинин фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаҫӑн боецӗсем пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 5 танкне, 2 орудине тата 4 трактор-тягачне пӗтерсе тӑкнӑ. Противникӑн 400 салтакӗпе офицерӗ ытла вилнӗ.

* * *

Саперсен Брызгалов юлташ командир пулса тӑракан взвочӗ пӗр участокра минӑсем хурса тухнӑ, ҫав минӑсем ҫине пулса 200 гитлеровец пӗтнӗ.

* * *

Парфенов юлташӑн подразделенинчи артиллеристсем (Калинин фрончӗ) пӗр уйӑх хушшинче нимӗҫсен артиллерин виҫӗ батарейине, 23 минометне пусарса лартнӑ, темиҫе орудипе пулемета пӗтерсе тӑкнӑ, темиҫе дзота ҫӗмӗрнӗ тата боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ. Ҫав вӑхӑт хушшинче нимӗҫсенне сахалтан та 500 салтакпа офицера пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Р. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячӗ, Орел облаҫӗн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче кӗрешекенскер, темиҫе кун хушшинче нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Противникӑн пехоти, авиацине артиллери пулӑшнипе, партизансем йышӑнса тӑракан пункта илме хӑтланнӑ. Партизансене хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче хӑйсен 500 салтакӗпе офицерне ытла ҫухатсан, гитлеровецсен каялла чакма тивнӗ. Партизансем оккупантсенчен оруди тата боеприпассем тытса илнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 111-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 70-мӗш полкран тыткӑна лекнӗ салтак Ф. Раймунд ҫапла каласа панӑ: «Юлашки ҫапӑҫура пирӗн ротӑра 40 ҫын вилнӗ, 70 ҫын аманнӑ. 3-мӗш ротӑра вӑрҫӑ пуҫланас умӗн 225 ҫын пулнӑ. Халӗ унта кивӗ салтаксенчен 5 ҫын кӑна тӑрса юлнӑ. Ыттисем е вилнӗ, е аманнӑ. Дисциплина питӗ япӑхланса кайнӑ. Хӑшпӗр салтаксем кӗске вӑхӑт хушшинчех темиҫешер взыскани илнӗ. Неймана, Файдта тата ытти салтаксене рота лавӗ ҫинчен ҫӑкӑр вӑрланӑшӑн тӗрмене хупмалла туса суд тунӑ. Унтер-офицера Герберт Мауна вӑл ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче ротӑран кайса блиндажа пытаннӑшӑн суда панӑ. Темиҫе салтак тарнӑ, анчах вӗсене тытнӑ. Вӗсене строй умӗнче персе пӑрахнӑ».

* * *

Противникӑн тытса илнӗ полевой почтинче иккӗмӗш дивизионӑн командирне (Полевая почта, 3833-мӗш номер) ҫырса панӑ заявление тупнӑ. Ҫав заявленире Адольф Тедтер Ганновертан ҫапла ҫырнӑ: «Манӑн ывӑл Альберт Тедтер аманнӑ. Унӑн ҫурӑмӗнче виҫӗ пуля тытӑнса юлнӑ. Полевой лазаретран ӑна ытти аманнисемпе пӗрле тавар вагонне лартса илсе кайнӑ. Вӗсем 8 кун кайнӑ, ҫул ҫинче вӗсене ҫимелли пӗртте паман. Вӗсен суранӗсене никам та салатса ҫыхман. Ҫавӑн пек асап тӳсни манӑн ывӑлӑн вӑйхалне хавшатнӑ. Апрелӗн 18-мӗшӗнче эпӗ унӑн патӗнче Варшавӑра пултӑм. Унта вӑл 7-мӗш ҫар лазаретӗнче вилчӗ, ӑна ҫар масарне пытарчӗҫ...».

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии“ звенине тума

ИШЛЕЙ. Ҫак кунсенче районри ҫамрӑк учительсемпе комсомолецсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Унта район центрӗнчи хӗрарӑмсен подразделенийӗ самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлӑ звенине тума чӗнсе каланине сӳтсе-явӗҫ. Ҫавӑн хыҫҫӑнах ҫамрӑк учительсем, пӗр кӑмӑллӑ пулса, самолетсен звенине тума укҫа пухма тытӑнчӗҫ. Пурӗ 2.350 тенкӗ укҫа пухӑнчӗ. Чи малтан комсомолка-учительница М. Соловьева юлташ 50 тенкӗ укҫа пачӗ, ытти учительсене ӑмӑртӑва чӗнчӗ. Ун хыҫҫӑн А. Харитонова, Н. Скворцова, А. Иванова учительницӑсем 100-шер тенкӗ парчӗҫ. Канашлура пулнӑ учительсем самолетсен звенине тӑвас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ. Нумайӗшӗ укҫисене унтах парчӗҫ, ыттисем 50—100-шер тенкӗ пама ҫырӑнчӗҫ. Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» звенине тума З. Митрофанова, З. Кирьянова, В. Сергеева комсомолкӑсем те 100-шер тенкӗ панӑ.

Н. РУСАНОВ.

СССР электростанцисен Халӑх Комиссариачӗн предприятийӗсемпе строительствисен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвне организацилер!

Кашир районӗнчи Ленин орденлӗ, Л. М. Каганович ячӗпе тӑракан Государственнӑй электростанцинчи рабочисем, инженерла-техникла работниксем тата служащисем чӗнсе калани

Хаклӑ юлташсем!

Оборона Халӑх Комиссарӗ Сталин юлташ майӑн пӗрремӗшӗнче панӑ приказ ҫине ответлесе, пирӗн тӑван ҫӗршыври ӗҫҫыннисем танксем, самолетсем, боеприпассем тӑвас тӗлӗшпе государство панӑ заданисене ирттерсе тултарассишӗн, 1942 ҫулта нимӗҫсен фашистла войскисене пӗтӗмпех аркатса тӑкма Хӗрлӗ Ҫара мӗн кирлӗ, ҫавсене пӗтӗмпех парса тӑрассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарса ячӗҫ.

Пиртен, энергетиксенчен, пӗтӗм промышленноҫӑн производство планне тултарасси тата ирттерсе тултарасси нумай килет. Пирӗн хамӑр пӗр аварисӗр тата отлично ӗҫленипе оборона предприятийӗсене тата пӗтӗм промышленноҫа энерги пӗр чарӑнмасӑр парса тӑрас пулать. Ҫавна тунӑ чухне пирӗн шалти мӗнпур ресурссене мӗн май пур таран мобилизацилес пулать—топливӑна, электроэнергине, материалсене, металломсене, запаслӑ пайсене, инструментсене тата оборудованисене перекетлес пулать тата вӗсемпе тирпейлӗ усӑ курас пулать. Эпир ҫу каҫа пур электростанцисенче тата сетьсенче те кӗрхипе хӗллехи максимума тӗплӗн хатӗрленме тивӗҫлӗ.

Эпир, Кашир районӗнчи Ленин орденлӗ, Л. М. Каганович ячӗпе тӑракан Государственнӑй электростанцинчи работниксем, Сталин юлташӑн майӑн 1-мӗшӗнчи приказӗпе хавхаланнӑскерсем, Электростанцисен наркомачӗн электростанцийӗсемпе сетьсенчи мӗнпур рабочисене, инженерсене тата служащисене, ытти наркоматсен электростанцийӗсенчи работниксен коллективӗсене, ҫавӑн пекех торф предприятийӗсенчи работниксен коллективӗсемпе энергетика строителӗсене, промышленноҫа кирлӗ таран тата пӗр чӑрмавсӑр электроэнергипе ӑшӑ парса тӑрассишӗн, топливӑпа электроэнергие чи нумай перекетлесе хӑварассишӗн, торф кӑлармалли, типӗтмелли, турттарса тухмалли плана ирттерсе тултарассишӗн тата ҫӗнӗ энергин ҫӗнӗ мощноҫӗсене эксплоатацие срокчен кӗртессишӗн Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту организацилеме чӗнетпӗр.

Кашир районӗнчи орденлӑ Государственнӑй электростанци работникӗсен коллективӗ хӑйӗн ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илет:

1. Турбогенераторпа хурана эксплоатацие кӗртес тӗлӗшпе панӑ задание 1942 ҫулти июнӗн 20-мӗш тӗлне тултармалла.

2. Пӗр аварисӗр ӗҫлемелле тата нагрузкӑсен диспетчерла графикне кашни кун тултарса пымалла.

3. Хамӑрӑн нушасем валли топливо тата электроэнерги расходлассине планпа пӑхнинчен чи нумай чакармалла тата кӗрхипе хӗллехи максимум валли топливӑсен кирлӗ запасне тумалла.

4. Июнь уйӑхӗнче топливӑна 500 тоннӑран кая мар тата хамӑрӑн нушасем валли каякан электроэнергие 50.000 киловатт-сехетрен кая мар перекетлесе хӑвармалла.

5. Ремонт ӗҫӗсене лайӑх пахалӑхпа туса пырса тата ремонт планӗсене срокченех тултарса пырса, кӗрхипе хӗллехи максимума тӗплӗн хатӗрленсе ҫитмелле.

6. Монтаж тата ремонт ӗҫӗсенче 1942 ҫул вӗҫленеччен ӗҫ тухӑҫлӑхне 10 процентран кая мар ӳстермелле.

7. Станцие кирлӗ квалификациллӗ кадрсене ҫак ҫулти август уйӑхӗччен пӗтӗмпех тупса ҫитермелле, вӗсене ҫӗнӗ кадрсем, ытларах хӗрарӑмсенчен, вӗрентсе хатӗрленипе тупса ҫитермелле.

8. Столовӑйсен, суту-илӳ пункчӗсен тата подсобнӑй хуҫалӑхӑн ӗҫӗсене кӑтартуллӑ туса хумалла.

Электростанцисемпе электросетьсем пӗр чӑрмавсӑр ӗҫлесси промышленноҫпа транспортӑн хӑш отраслӗсенчен килет—эпир ҫавсен работникӗсен коллективӗсене чӗнсе калатпӑр:

Торф промышленноҫӗнче ӗҫлекен юлташсем! Электростанцисене торф пӗр чарӑнусӑр парса тӑрӑр.

Энергетика строительствисенчи юлташсем! Энергетикӑллӑ ҫӗнӗ мощноҫсене эсплоатацие срокчен кӗртмелле ӗҫлӗр.

Промышленность предприятисен электростанцийӗсенче ӗҫлекен юлташсем! Вырнаҫтарса лартнӑ мощноҫсемпе туллин усӑ курассишӗн, диспетчерла график тӑрӑх пӗр чарӑнусӑр ӗҫлессишӗн, топливӑпа электроэнергие перекетлессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту организацилӗр.

Ҫӗркӑмрӑк промышленноҫӗнче ӗҫлекен юлташсем! Электростанцисене ҫӗркӑмрӑк кирлӗ чухлех кӑларса тата тиесе ярса тӑрӑр, электростанцисене топливо пӗр чарӑнмасӑр парса тӑмалла пултӑр.

Чугунҫул тата шыв ҫул транспорчӗсенче ӗҫлекен юлташсем! Электростанцисем валли топливо турттарса пыракан маршрутсене хӑвӑрт ҫӳретӗр.

Эпир Оборонӑн Государственный Комитетӗнчен электростанцисен, торф предприятийӗсен тата электростанци строительствисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче ҫӗнтерекенсем валли Оборонӑн Государственный Комитечӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавӗсене тума ыйтатпӑр.

Эпир ВЦСПС-ран тата Электростанцисен Наркоматӗнчен унӑн предприятийӗсемпе строительствисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене кашни уйӑхрах туса пыма ыйтатпӑр.

Социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн ялавне ҫӳлерех ҫӗклер!

Ленинӑн—Сталинӑн ялавӗпе, пирӗн юратнӑ ҫулпуҫ тата полководец Сталин юлташ ертсе пынипе—малалла, ҫӗнтерӳ патне!

Чӗнӗве Каширти Ленин орденлӗ, Л. М. Каганович ячӗпе тӑракан Государственнӑй электростанцири работниксен цехӗсенчи тата сменисенчи пӗрлешӳллӗ пухӑвӗсенче пурте пӗрсаслӑн пулса йышӑннӑ.

Завод куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялава илме тивӗҫлӗ пулнӑ

Шупашкарти Бенский юлташ директор пулса тӑракан завод коллективӗ Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура пысӑк ҫӗнтерӳ тунӑ: май уйӑхӗнче продукци памалли плана ирттерсе тултарнӑ. Ҫавӑншӑн завод коллективне Професиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральнӑй Совечӗпе Промышленноҫӑн пӗр Халӑх Комиссариачӗ хӑйсен куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялавне пама йышӑннӑ.

Ҫав ятпа июнӗн 8-мӗшӗнче заводри рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служащисен митингӗ пулса иртрӗ. Митингра завод директорӗ Бенский, партбюро секретарӗ Поддубко, цех начальникӗ Буйвалов, мастер Кириллов т. ыт. юлташсем сӑмах тухса каларӗҫ. Вӗсем ӗҫри ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене асӑнса, завод коллективӗн малашнехи задачисем ҫинчен чарӑнса тӑчӗҫ.

Митингра ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗсем Чарыковпа Крылов юлташсем, Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗ Сомов юлташ, ВКП(б) Шупашкар Хула Комитечӗн секретарӗ Романова юлташ пулчӗҫ.

Чарыков юлташ завод коллективне Партин Чӑваш Обкомӗ, Партин Шупашкар хула комитечӗ тата Чӑваш республикин правительстви ячӗпе саламларӗ.

Май уйӑхӗнче производствӑллӑ пысӑк ҫӗнтерӳ тунипе тата ВЦСПС-па Наркоматӑн куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ ялавне илме тивӗҫлӗ пулнипе хавхаланнӑ коллектив килес уйӑхсенче тата лайӑхрах, тата тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулчӗ, хӑйӗн ҫине ҫакӑн пек обязательствӑсем илчӗ:

иккӗмӗш кварталти производство программине июнӗн 22-мӗшӗ тӗлне тултармалла;

июнь уйӑхӗнчи производство программине 27 кун хушшинче тултармалла;

иккӗмӗш кварталти заданисене июнӗн 15-мӗш тӗлне тултармалла.

Кусемсӗр пуҫне рабочисем хӑйсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерме, ӗҫ пахалӑхне лайӑхлатма, мастерсем хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксене ӗҫе вӗрентме пулчӗҫ.

Митингра пулнисем юратнӑ ҫулпуҫ тата полководец Сталин юлташ патне саламлӑ ҫыру ячӗҫ.

Ҫӗнӗ профессисене вӗренеҫҫӗ

КАНАШ. Ҫӗнӗ профессисене вӗренни вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Токарь слесарь ӗҫне пӗлсен, хӑйӗн станокне ялан юсавлӑ тытма, ҫавӑн пекех фрезеровщик та строгальщик ӗҫне пӗлсен 2 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пултарать. Вагонсем юсакан заводри чылай рабочисем ҫӗнӗ профессисене вӗренеҫҫӗ. Инструментальнӑй цехри строгальщик Лукин юлташ слесарь ӗҫне, шлифовальщиксем Игнатьевпа Гатин юлташсем заточник ӗҫне вӗренсе ҫитрӗҫ.

Ҫӗнӗ профессисене уйрӑмах электроцехри рабочисем ҫине тӑрса вӗренеҫҫӗ. Кочегар Воробьев юлташ трубинӑн конденсациллӗ установкине вӗренчӗ те халӗ машинист помощникӗ пулса ӗҫлет. Вӑлах пӑс хуранӗсенчи шыва пӑхса тӑма пултарать. Ҫак ӗҫсене Семенов, Михайлов юлташсем те пӗлеҫҫӗ. Электромонтер Шапкин юлташ электростанцинчи дежурнӑй ӗҫне вӗренсе ҫитнӗ.

М. АНДРЕЕВ.

МТС-семпе колхозсенчи социализмлă ăмăртăву

Ăмăртăва пысăк ĕçкленӳпе хутшăнаççĕ

ÇĔМЕРЛЕ, июнĕн 8-мĕш. (Хамăр корр.). «Путь крестьянина» тата Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсенчи колхозниксен чĕнĕвне çӳтсе явасси районри колхозсенче анлăн саралса пырать. Вĕсем Совет Союзĕнчи пур колхозсене те кунсерче пуху пулса иртнĕ. Колхозниксем тата вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессине ĕçпе продуктивноçне ӳстерессишĕн социализмлă ăмăртăва тухса чĕнĕвне пур колхозсене те ирласа йышăнаççĕ. Колхозниксем колхозницăсем Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пысăк ĕçкленӳпе хутшăнаççĕ.

Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозра сак кунсенче пуху пулса иртрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем социализмлă ăмăртăва хутшăнса пысăк ĕç тума пулнă. Кăçалхи тырпула 16 ĕç кунĕ хушшинче пухса кĕме обязательство илчĕç. Тырпул тухăçне планпа пăхнинчен 20 процент ытларах туса илме палăртрĕç. Сĕт-кантăра кăçал кашни гектаран 3,8-шер центнер илмелле пулсан, вĕсем ăна 4,5 центнер, çĕрулми гектар пуçне 1000 пăт туса илме обязательство илнĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене 15 кун малтан парса татма, кĕркунне сĕтпе сухине октябрĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпе туса çитерме пулнă.

Колхозри общественнă вылăх-чĕрлĕх фермисене ĕçлекенсем те пысăк обязательствăсем илнĕ. Колхоз ялĕнчи выльăхсен шутне планпа пăхнинчен ытларах ĕрчетет; планран иртерсе 25 ĕне, 75 сурăх, 100 сысна усрама пулать, кашни сăвакан ĕнерен çулталăкне 1200 литрпер сĕт суса илме пулать.

Пренерни «Большевик» колхоз членĕсем те чĕнĕве пысăк хавхаланупа çӳтсе явса Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен обязательстви тăрăх кашни гектартан 14 центнертан кая мар тырă, 107 центнер çĕрулми туса илме обязательство илнĕ, ĕнесен йышне плантан иртерсе 5 пуç, сурăхсен йышне 14 пуç, сыснасен йышне 20 пуç чухлĕ ӳстерме, кашни сăвакан ĕнерен плана пăхнинчен 100 литр ытларах суса илме обязательство илнĕ.

Хуларн ĕçсыннисем 70 гектар пахча-çимĕç лартнă

ÇĔМЕРЛЕ. (Хамăр корреспондент.). Хуларн ĕçсыннисем хăйсен килкартисенче тата рабочисемпе служащисем анисенче пахча-çимĕç лартма тăрăшрĕç. Уйрăмах комбината «Большевик» завод тавраш тата унта ĕçлекен рабочисемпе служащисем пурăнакан поселоксенчи вырăнсене пахча-çимĕçсем лартнă. Паянхи кун хулари ĕçсыннисем пурĕ 70 гектар çине пахча-çимĕçсем лартнă.

Çум çумлас ĕç пуçланчĕ

ÇĔМЕРЛЕ, июнĕн 5-мĕш. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсем çум çумлас ĕçе тимлĕн тытăнчĕç. «Авангард», «Красноармеец» колхозсем ĕнер пĕтĕм вăй-халпа çум çумлама тухнă. «Молодая сила», «Самолет», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те тырăсене çум курăксенчен тасатас ĕç лайăх пулса пырать.

Кроликсен пысăк тупăш параççĕ

ШАХАСАН. Çĕнĕ Пинерти «Пионер» колхозан фермине иртнĕ çул 55 кролик çеç пулнă. Халĕ кроликсен йышĕ 255 пуçа çитнĕ. Колхоз государствăна 62 килограмм çăм парасса тухнă. Çăм вырăнне кролик мамăкне 6 килограмм панă та, колхоз государствăна çăм парас обязательствине пĕтĕмпех пурнăçланă.

А. ОРЛОВ.

Государствăна срокчен 1000 центнер тĕштырă пачĕç

ШАХАСАН, июнĕн 8-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсенче Краснодар крайĕнчи «Путь крестьянина» тата Казах ССР-чи Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕсен чĕнĕвне хĕрӳллĕн çӳтсе явнă. Вĕсем колхозсенче Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каланине кашни колхозник, колхозница тĕплĕн анлантарса парас шутпа ВКП(б) райкомĕ районри активне ялсене кăларнă. Районри колхозсем чĕнĕве хирĕç Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва пысăк ĕçкленӳпе хутшăнаççĕ. Кăçал пысăкран та пысăкрах тырпул туса илессишĕн тата вылăх-чĕрлĕх йышне ӳстерессишĕн тата унăн продуктивноçне хăпартассишĕн кĕрешессе хăйсен çине обязательствăсем илчĕç.

Халĕ, пирĕн таван çĕршыв ирĕклĕхне ыслăхшăн хаяр çапăçу туса пынă вăхăтра, колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен Совет государствине памалли тырра срокченех парса татма тăрăшаççĕ. Паянхи куна Шăхасан районĕнчи колхозсем государствăна 1942 çулхи обязательство шучĕпе 1000 центнер тĕштырă панă. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз государствăна 350 центнер тырă леçсе панă. Çавăн пекех Ухманти «Победа» колхоз 107 центнер, Вăрман Енĕрри «Свобода» 38 центнер, Çĕнĕ Мамăн ялсоветĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз 50 центнер, Ухман ялсоветĕнчи «Ямурза» колхоз 25 центнер, Ямбахри «Майак» 1-мĕш колхоз 60 центнер тырă леçсе панă.

Çакăнпа пĕрлех районри колхозсенче çум çумлас ĕç вăйлăн пырать. Иртнĕ атнари обязательствăсене чыслăн пурнăçласа, колхозниксемпе колхозницăсем пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн хĕрӳллĕн ĕçлеççĕ. Паянхи куна пурĕ районĕпе 894 гектар çинчи тырăсене çумкурăксенчен тасатнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз тырăсене çумкурăксенчен тасатас ĕçе вĕçлесе пырать. Паянхи куна 215,7 гектар çинчи тырăсене çумкурăксенчен тасатнă. Колхозăн 1-мĕш тата Краснов ертсе пыракан бригадăсем ку ĕçре уйрăмах тимлĕн ĕçлеççĕ. Çĕнĕ Пинерти «Пионер» колхоз паянхи куна 25 гектар çинчи сĕлле тата 4 гектар çинчи кок-сагыз калчисене çумкурăксенчен тасатнă.

С. ШАДИН.

Кросăн малтанхи кунĕн итогĕсем

ИШЛЕЙ. Малтанхи кун, июнĕн 7-мĕшĕнче, кросс Ишекпе Ишлей кусчĕсенче пулса иртрĕ. Çав кун кроса 667 çын хутшăннă. Вĕсенчен 452 çын ГТО, 215 çын БГТО значокĕсен нормисене панă.

«Верный путь», Папанин ячĕпе тăракан колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксем ирхине 11 сехет тĕлне Ишеке пухăнчĕç. Уйăрса хунă дистанци умĕнче ушкăнăн-ушкăнăн тăраççĕ. Ку ĕнтĕ отделенисем. Пурте пуçтарăнса çитсен, кросс пуçланнă ячĕпе калаçу пулса иртрĕ. Унтан отделени хыççăн отделени ăмăртăва хутшăнма тытăнчĕç. Ăмăртура çамрăксем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Акă Зинаида Афанасьева комсомолка 500 метра 1 минута та 60 секундăра чупса тухрĕ, гранатăсене 18 метра ывăтрĕ, вăççĕшне те окопа ӳкерчĕ. Юлия Филиппова комсомолка 500 метра 1 минута та 40 секундăра чупса тухрĕ, гранатăсене 17 метра ывăтрĕ, виççĕшне те окопа ӳкерчĕ. Арçынсем пĕр километр чупрĕç. И. Леонтьевпа А. Мунтов комсомолецсем 2 минута та 5 секундăра чупса тухрĕç. Вĕсем гранатăсене вырт-са 20 метр вырăнне 23—30 метра ывăтрĕç. Матвей Логинов пионер пĕр километра 2 минута та 43 секундăра чупса тухрĕ. Гранатăна выртса 18 метра ывăтса окопа ӳкерчĕ.

Ишлей кустне кроса хутшăнма Мăн Явăш, Çĕньял Покровски, Салабайкасси, Хыркасси, Кибечкасси ялĕсенчи комсомолецсемпе çамрăксем пухăннă. Малтанхи кун кросра Хыркассинчи колхоз çамрăкĕсем 87 çын пулнă. Вĕсем 38 çын ГТО, 49 çын БГТО значокĕсен нормисене панă.

«Труд» колхозри комсомолецсемпе çамрăксем кроса 42 çын хутшăннă. Вĕсенчен 39 çын кăтартнă вăхăтра чупса тухнă, гранатăна аван ывăтнă. Çамрăк колхозник Б. Сорокин комсомолец пĕр километра 2 минута та 32 секундăра чупса тухнă. Выртнă çĕртен гранатăна 26 метра ывăтнă. Колхозница Ольга Кушманова уйăрса панă дистанцие 1 минута та 50 секундăра чупса çитнĕ. Гранатăна ывăтас тĕлĕшпе те кăтартнă нормăна çитернĕ.

Колхоз çамрăкĕсемпе пĕрлех кроса комсомолецсемпе çамрăксен подразделенийĕсенчи хĕрачасем 91 çын хутшăннă. Вĕсем пурте ГТО значокĕн нормисене панă. Уйрăм комсомолкăсемпе çамрăк хĕрачасен ăмăртури результачĕсем питех те аван. А. Сютрукова комсомолка 500 метра 1 минута та 26 секундăра, Н. Лукинапа Ю. Трофимова комсомолкăсем 1 минута та 35 секундăра чупса тухрĕç. Кашни вĕсем виççĕр граната ывăтнă, пурне те окопа ӳкернĕ.

Çĕньял Покровскинчен кроса 75 çын тухнă. Вĕсенчен 64 çын ГТО, 11 çын БГТО значокĕсен нормисене панă.

Çитес кунсенче кросс Тăрăн, Ярабайкасси кусчĕсенче пулать. Унсăр пуçне всевобуч боецĕсем, тăшманăн танкне çĕмĕрсе тăкма вĕренекенсем, райцентрти хĕрарăмсен осоавиахим подразделенийĕнчи 32 çын кроса хатĕрленеççĕ, кашни кунах тренировкăсенче пулаççĕ.

Кросăн малтанхи кунне итоглана хыççăн çакă палăрчĕ: чупас тĕлĕшпе çамрăксем пултараççĕ, анчах гранатăна ывăтас тĕлĕшпе ĕç начартарах тăрать. Çавăнпа ку çитменлĕх çине тĕплĕнрех çавăрăнса пăхмалла, граната ывăтас тĕлĕшпе тренировкăллă занятисем ытларах ирттермелле.

Н. РУСАНОВ,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ янă саламсем çине Британи авиацийĕн командованийĕ янă ответсем

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ Британи авиацийĕн командованине янă саламсем çине çакăн пек телеграммăсем илнĕ:

Хĕрлĕ Çарăн сывлăш çар вăйĕсен командующине— авиацин генерал-лейтенантне А. Новикова.

Королевски сывлăш-çар вăйĕсен ячĕпе эпĕ Сире пире салам янăшăн питĕ хĕрӳллĕн тав тăватăп. Хĕрлĕ Çарăн сывлăш-çар вăйĕсем пек хастарлă та çирĕп союзниксран саламсем илнипе эпир савăнатпăр. Эпир гитлерла çар машинине вăйлăн пыра-пыра çапнисем пирĕн Совет Союзĕнчи юлташсене пулăшĕç тесе шанса тăратпăр, эпĕ тата Сире çакна шантарса калатăп: çавăн пек пыра-пыра çапассине эпир тăшмана çĕнтеричченех вăйлăнрах та вăйлăнрах туса пырăпăр.

Авиацин главнăй маршалĕ Ф. А. Чарльз Портал, — королевски сывлăш-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ.

Хĕрлĕ Çарăн инçе вĕçсе кайса бомбардировка тăвакан авиацин командующине—авиацин генерал-лейтенантне А. Голованова.

Эсир янă саламсем пирĕншĕн уйрăмах çакăн пирки паха: вĕсене хăйсен хăюлăхĕпе тата ăсталăхĕпе пире çавтери савăнтарса тăракан летчиксем янă. Гитлерла Германия «Çитĕ» тесе кăшкăрса яричченех эпир хамăр кĕрешĕве чарса лармастпăр.

Авиаци маршалĕ А. Т. ГАРРИС, бомбардировщика тăвакан авиацин командующийĕ.

Англири хĕрарăмсем—совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕçле комитетне

Совет хĕрарăмĕсен фашизма хирĕçле комитетне Лондонран çакăн пек телеграмма килнĕ:

— Эсир майăн 10-мĕшĕнче чĕнсе калани çине эпир, Англири хĕрарăмсен мĕнпур ушкăнĕсен представительницисем, сире çакăн çинчен каласшăн: эсир мĕнпур тĕнчери хĕрарăмсене пĕтĕм чун хавалĕпе чĕнсе каланине илсе эпир питĕ хумханатăмăр. Эпир сирĕн чĕнĕвĕр çине ответ пама пултарнипе савăнатпăр. Эпир сирĕн пекех çакна шанса тăратпăр: пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен, çар-та арçынсене активлă пулăшса тăракансем, нумай миллионлă çарĕ Гитлерпа унăн кĕтĕвне татăклăн тата урăх ура çине тăраймиа туса çапса аркатма пулăшса тăрĕ. Эпир сирĕн шухăш-кăмăлăрпа хавхаланатпăр, эпир кирек мĕн пулсан та часрах çĕнтересчĕ тесе тăрăшатпăр. Çĕнтерӳ вăл хăй тĕллĕн пулманнине эпир пĕлетпĕр. Эпир мĕнле хăвăрт çĕнтересси, çĕнĕ тĕнчене, миллионшар çын çапăçса вилсе тума тăрăшнă çĕнĕ тĕнчене мĕнле хăвăрт тума тытăнасси эпир çак çитес уйăхсенче мĕнле тăрăшнинчен килнине эпир пĕлетпĕр. Эпир Гитлера хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешекенсен ретĕнче сирĕнпе юнашар тăма тупа тăватпăр. Демократиллĕ вăйсен фашизма хирĕç пыракан аслă кĕрешĕвĕнче хамăр йышăнмалли вырăна йышăнас тесе эпир уйăхирсенче, предприятисенче, вырăнти оборонăн отрячĕсенче тата фронтра икĕ хут хытăрах ĕçлеме сăмах паратпăр. Эсир хĕвелтухăçĕнче пыра-пыра çапнă вăхăтрах хĕвеланăçĕнче те пыра-пыра çапас тесе, çак çулта çĕнтерес тесе, хамăр ачасем валли ирĕклĕхпе телейлĕх туса хурас тесе эпир арçынсемпе юнашар тăрса кĕрешме хатĕр.

Англи хĕрарăмĕсемпе совет хĕрарăмĕсен туслăхĕ сыва пултăр!

Телеграммăна çаксем алă пуснă: **Беатриса Кинг**—Англипе совет хĕрарăмĕсен комитечĕн председателĕ тата культурăллă обществăн председателĕ. **Джойс Кербери**—Англипе советсен Бирмингамри пĕрлĕх комитечĕн председателĕ т. ыт. те.

(ТАСС).

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ХАРЬКОВРА ВАРВĂРЛА ХУÇАЛАННИ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 6-мĕш. (ТАСС). Нимĕçсен «Дас Райх» хаçачĕ гитлеровецсем Харьковра мĕн-мĕн çĕмĕрни çинчен тата унти халăх мĕнтери пысăк, нуша тӳсни çинчен пĕр вăтанмасăр уççăнах çырать. Хаçат калану тăрăх, «халăхăн калама çук начар пурнăçĕ ытларах та ытларах начарланса пырать. Хулара топливо тавраш çук, электростанци тата водопровод ĕçлемеççĕ. Хулари транспорт çĕмĕрĕлнĕ. Ваннă трамвайсемпе троллейбуссем депора лараççĕ. Хула нумай пушаннă. Çынсем нумайĕшĕ выçлăхран хăтăлма ялсене саланнă. Харьков çыннисем пасарсенче хăйсен кăшт тăрса юлнă япалисене сутаççĕ, ку вăл—çĕтĕк-çатăк таврашсем. Çынсем хăйсен юлашки япалисемпе продуктсем улăштарса илеççĕ. Вĕсем вараланчăк, çĕтĕк-çатăк çӳреççĕ».

Ĕлĕк,—тет хаçат,—халăх театрсене, киносене çӳренĕ, унăн библиотекăсем, шкулсем, аслă шкулсем, спорт площадкисем пулнă. «Халĕ,—тет гитлерла хаçат,—нимĕç салтакĕсем çеç кафесемпе оперăна тултарса тăраççĕ, çак театрта оркестра нимĕç ефрейторĕ ертсе пырать».

Халăх нимĕçсене питех те кураймасть, тесе ӳпкелешет «Дас Райх» хаçат. Хулара вĕсем валли никам та ĕçлесшĕн мар, тет.

Оккупантсем хăйсем тытса илнĕ хулари халăхран хăраççĕ. Çав хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Харьков урамĕсем тăрăх кунĕн-çĕрĕн çар отрячĕсем патрульлесе çӳреççĕ. Тĕттĕм пулсан çынсене хăйсен килĕсенчен тухма чараççĕ. Нумай çуртсем çине гитлеровецсем çыхăну хатĕрĕсене пăснăшăн асаплантарса вĕлеретпĕр тесе хăратса «Асăрхаттарусем» çыпăçтарса тухнă.

Хулара ĕççĕр çынсем питех те нумай, вĕсене оккупантсем ирĕксĕрлесе Германие илсе каяççĕ.

Германи фашисчĕсем Минскри халăха асаплантарни

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 7-мĕш. (ТАСС). Гитлерла хаçат «Дейче цейтунг ин Остланд» пĕлтернĕ тăрăх, май уйăхĕн пуçламăшĕнче Минскра 30 гражданина çакса вĕлернĕ тата 120 çынна персе пăрахнă. Хаçатра çырнă тăрăх, асаплантарса вĕлернĕ çынсем «анлăн саралнă организацин руководителĕсем пулнă, çав организаци партизансене нумай вăхăт хушши хыпарсем, апатçимĕç, хĕçпăшал, эмелсем парса тăнă». Хаçат партизансем юлашки вăхăтра оккупациллĕ влаçсен бургомистрĕсене тата ытти представителĕсене нумай вĕлерни çинчен пĕлтерет. Хаçат каланă тăрăх, Белорусси халăхĕ «Германи влаçĕсем туса ирттерекен ĕçсене пурнăçа кĕртме памасть».

Çак кунсенче Минскра Васюкевич хушаматлă служащие Германи çарçыннине вĕлернĕшĕн асаплантарса вĕлернĕ.

Японецсем Китая хирĕç çапăçнă чухне отравляющи веществосемпе усă курни çинчен Рузвельт пĕлтерни

ВАШИНГТОН, июнĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рузвельт корреспондентсене çакăн пек официальнăй пĕлтерӳ вуласа панă: «Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви илнĕ шанчăклă сведенисем тăрăх, Японин хĕçпăшаллă вăйĕсем Китая хирĕç çапăçнă чухне тĕрлĕ вырăнсенче отравляющи е сиенлекен газсемпе усă кураççĕ. Çак ыйтăва йăлтах уçăмлă тумалла: Япони Китая хирĕç е пĕрлешнĕ çĕршывсенчен кирек хăшне те пулин хирĕç малалла та çавăн пек этемлĕхе тивĕçлĕ мар вăрçă туса пырать пулсан, çавăн пек тунине Америка правительстви США-на хирĕç тунă ĕç тесе шутлать. Вара эпир хамăр енчен вăйлăн ответ парăпăр. Пирĕн вĕсене хирĕç хаяр ответ парассине пĕтĕмпех пурнăçа кĕртме хатĕр тăрас пулать. Çав ĕçшĕн Япония ответлă пулса тăрать».

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Китай хушшинче тунă килĕшӳ

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Государственнăй департаменчĕ хĕçпăшала кивçен тата аренда йĕркипе парасси çинчен США-па Китай пĕр-пĕрнипе тунă килĕшӳн текстне пичетленĕ.

Ку килĕшӳ пирки государственнăй департамент пĕлтернинче çапла каланă: «Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ Хэлл тата Китайăн ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сун Цзывень вăрçăра пĕр-пĕрне пулăшассин принципĕсем çинчен США-па Китай правительствисем хушшинче тунă килĕшĕве алă пуснă.

Китайпа тунă килĕшĕвĕн статьисем пур енчен те тенĕ пекех США-па Англи правительствисем пĕр-пĕринпе 1942 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче тунă килĕшӳрипе пĕр пекех.

Китайпа тунă килĕшӳре çакна палăртнă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Китая кирлĕ япаласем тăратассине тата пулăшассине малалла та туса пырать, пĕрлехи тăшмансене хирĕç пĕрлешсе вăрçă çĕрте Китай пама пултаракан пулăшăва Китайран малалла та илсе тăрать. Килĕшӳ çав пулăшăвăн условийĕсене хальхи вăхăтра тĕплĕн кăтартса пама тăрăшмасть».

Малтанхи утăмсем

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине эпир кашни колхозник патне çитертĕмĕр. Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара ытлашшипех аш-какай, сĕт-çу парса тăрас тесе, пирĕн районри колхозсем 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лайăхрах пурнăçлассишĕн Шăмăршă районĕнчи колхозсемпе социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Унтанпа икĕ уйăх ытла иртрĕ. Çак хушăра пирĕн колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малтанхи утăмсене турĕç. Майăн 20-мĕш тĕлне район 1942 çулти общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 92 процент, сурăхсем енĕпе 101 процент тата сыснасем енĕпе 85 процент тултарчĕ.

Пирĕн районри колхозсемпе колхозниксен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа усрас тата вĕсен продуктивноçне ӳстерес ĕçре пуян опыт пур.

«Правда» колхозра кăçал 16 пăру тата 75 путек илсе пурне те пăхса çитĕнтернĕ. Çавăн пекех Чкалов ячĕпе тăракан колхозра та 16 пăру, 40 путек, 70 сысна çури илнĕ, пурне те сыхласа хăварнă.

Ышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн ăмăртăва тухнă хыççăн, «Звезда», «Маяк», «Кзыл Тан», «Красное знамя» т. ыт. колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕç чылай вăйланчĕ. Фермăсен ĕçĕсем те лайăхланчĕç. «Красное знамя» колхозра (колхоз председателĕ Пирогов, парторг Кузьмин юлташсем) май уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 113 процент, сурăхсем енĕпе 105 процент, сыснасем енĕпе 115 процент тултарчĕ, çывăхри колхозсене 80 сысна çури сутрĕ. «Правда» колхоз фермисенче майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ планпа пăхнинчен 6 пуç, сурăхсен хисепĕ 45 пуç ытларах. Ку колхозра халĕ сысна ферми организациленĕ. Унта пурĕ 30 сысна ытла.

«Канаш» колхоз (колхоз председателĕ коммунист Макаров юлташ) майăн 10-мĕш тĕлнех 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăхсем тĕлĕшпе 37 процент, сурăхсем тĕлĕшпе 42 процент, сыснасем тĕлĕшпе 6 процент ирттерсе тултарнă. Урăх колхозсен фермисене ысăклатма колхоз контрактаци йĕркипе 90 сысна çури сутнă.

Общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана «Звезда» колхоз (колхоз председателĕ Кргиев, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Феизов юлташсем) çулсеренех ирттерсе тултарать. Кăçал та вăл майракаллă шултăра выльăхсене планпа пăхнинчен 10 процент, сурăхсене 11 процент ытларах ĕрчетме пултарчĕ. Кунта та кăçал сысна ферми организациленĕ.

Районри колхозниксем, рабочисемпе служащисем хăйсен çамрăк выльăхĕсене кăмăллăнах контрактацилерĕç, ĕнесĕр колхозниксене пăрусем туянтарчĕç. «Правда» колхоз 45 пăру, 25 путек контрактацилес вырăнне 51 пăру, 83 путек контрактацилерĕ. Контрактаци ĕçĕ Молотов, Ворошилов, Крупская ячĕсемпе тăракан, «Красный Октябрь», «Осоавиахим» колхозсенче те ăнăçлăн иртрĕ. Район майăн 20-мĕш тĕлне пăрусене 102 процент, путексене 100 процент, сысна çурисене 116 процент контрактациленĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче çĕнтерӳ тума Хĕрлĕ Çара районри ĕçсыннисем вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа вĕсем фронта 16 центнер аш-какай, 33.000 литр сĕт т. ыт. те ярса пачĕç.

Çĕрпӳ районĕнчи «Цивильстрой» колхоз членĕсен пуçарăвĕпе пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем оборона фондне хывма 17 вăкăр, сурăхсемпе качакасем 218, сыснасем 83, хуркăвакалсем тата чăхсем 1.136 пуç çитĕнтереççĕ, фронтовиксене 15.300 çăмарта ярса параççĕ.

Казах ССР-чи Алма-Ата облаçĕнчи Кугалински районри Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсем Совет Союзĕнчи пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен работниксене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăкрах çитĕнӳсем тăвас тесе Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каларĕç. Вĕсен чĕнĕвне сӳтсе явнă хыççăн, районра малта пыракан колхозсен фермисенче ĕçлекенсем социализмлă ăмăрту ялавне çӳле çĕклерĕç, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илчĕç. «Канаш» колхоз членĕсем 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана 40 процент ирттерсе тултарма, государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăм тата çăмарта памалли обязательствăсене срокчен тултарма пулчĕç. Районра чапа тухнă Екатерина Ивановна Куракова («Красное знамя» колхозран) иртнĕ çул 8 сысна аминчен 87 çăвăр илнĕ. Ăмăртăва хутшăнса кăçал вăл кашни амаран 13-шер çурă илме пулчĕ. Çавăн пекех «Звезда» колхоз членĕ, пăру пăхакан Махмутова юлташ та ăмăртăва хутшăнса, хăй пăхакан пăрусен йывăрăшне кашни кунах 15—17 процентран кая мар хутшăнтарса пыма пулчĕ.

Т. ВАЛЕЕВ,
ВКП(б) Чкаловски райкомĕн секретарĕ.

Англи бомбардировщикĕсем Рур облаçĕ çине вĕçсе кайса вăйлăн тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 6-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк отрячĕ Рур облаçĕнчи промышленноçлă районсем çине çĕнĕрен вĕçсе кайса вăйлăн тапăннă. Çав операцисенчен 13 самолет каялла таврăнман.

Англи бомбардировщикĕсем Эмден çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: июнĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Германин Эмден порчĕ çине вĕçсе кайса тапăннă. Çанталăк лайăх тăнă, бомбардировщиксене ĕçлеме майлă пулнă. Хулара вăйлă пушарсем тухнă. Çавăн пекех бомбардировочнăй тата истребительнăй авиаци противникăн Голландири аэродромĕсем çине вĕçсе кайса тапăннă. Çак мĕнпур операцисенчен 10 бомбардировщик тата пĕр истребитель каялла таврăнман.

Чехословаки халăхĕн палачĕ Гейдрих вилнĕ

«Чехипе Морави протекторне» Гейдриха Прага çывăхĕнче вĕлерме тапăннă чух суранлатнăччĕ, Гейдрих çав суранĕсенчен халь вилнĕ, ун çинчен Берлинра официально пĕлтернĕ.

Прагăри радио пĕлтернĕ тăрăх, Гейдриха вĕлерме тапăннă май персе пăрахнисен пĕтĕм хисепĕ 159 çынна çитнĕ. (ТАСС).

Германи самолечĕсем Швеци территорийĕ çийĕнче вĕçнĕ пирки Швецире тарăхаççĕ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 5-мĕш. (ТАСС). Бофорсри çар хатĕрĕсем тăвакан заводсен коллективĕ тата Карлскугăри металлистсен профорганизацийĕ оборона министрĕ Шельда патне петици çырса янă. Çав петицире вĕсем Бофорс завочĕсем çинче Германи самолечĕсем вĕçнине хирĕç тата Швецин сывлăшран тапăннинчен сыхлакан служби пассивлă пулнине хирĕç протестлеççĕ. Петици авторĕсем вара çавăн пек вĕçевсем татах та пулассине хирĕç татăклă мерăсем йышăнма ыйтаççĕ.

«Дагенс нюхетер» хаçат кун пирки çапла çырать: «Бофорсăн массăллă петицийĕ вăл ютçĕршывсен самолечĕсем сĕмсĕрленсе тата маршрутран пăрăнса вĕçсе çӳренĕ пирки халăх мĕн пек хытă тарăхнине лайăх кăтартса парать. Ун пек вĕçевсем вĕсем Карлскуга районĕнче çеç мар пулнă. Правительство ку тĕлĕшпе халăха кирлĕ пек лăплантармалли ĕçсем тăвайманха».

«Вăрçакан çĕршыва,—тесе çырать «Афтонтиднинген» хаçат,—самолетсем тата горючи пахарах ĕçсем тума кирлĕ, çавăнпа вăл хăйĕн летчикĕсене Швецин илемлĕ çутçанталăкне курса савăнма кăна прогулкăна ямасть. Çак вĕçевсене урăхла тĕллевсемпе, практикăллă тĕллевсемпе тăваççĕ. Анчах пирĕн зенитчиксене Германи тата Финлянди самолечĕсем çине пеме чарнинчен тĕлĕнмелли çеç юлать».

«Пирĕн çĕршывăн нейтралитетне пăсакан тата пирĕн сывлăшран тапăннинчен сыхланмалли оборонăран мăшкăллакан çав вĕçевсем Швеци халăхне кирек мĕнрен те ытларах тарăхтараççĕ», тесе çырать июнĕн 2-мĕшĕнче «Гетеборгс постен».

Çак ыйту тăрăхах «Нью Даг» хаçат çапла çырать: «Чехословаки» пек çĕршывсен оборона вăйлă пулнă, анчах вĕсем пĕр хутчен те перейме. Вĕсен кунçулĕ мĕн патне çитсе тăнине эпир куртăмăр. Францире те çар руководстви пиллĕкмĕш колонна аллинче пулнă пирки унăн та кунçулĕ çавăн пекех пулнă.

Оборона ютçĕршыв самолечĕсене Бофорсри заводсем çинче тата Буден çинче вĕçсе çӳреме чараймасть пулсан, кашни уйăхрах оборона валли 200-шер миллион крона тăкаклама кирлех-ши».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашская республиканская/контора Главнефтесбыта с глубокой скорбью извещает о смерти начальника финансово-планового отдела и члена месткома
СРИБНОГО
Василия Тарасовича
и выражает соболезнование семье покойного.
Похороны состоятся 9 июня 1942 г. в 18 часов. Вынос тела из квартиры ул. Ленина, дом № 16.

Учхозу Вурнарского зоотехникума требуется бухгалтер, знакомый с с./х. бухгалтерией. Обеспечивается квартирой и продуктами из подсобного хозяйства.
Обращаться: д. Булатово, Вурнарского района ЧАССР.

Чувашскому тресту «Росглавхлеб» требуются: главный бухгалтер, нормировщик, товаровед и зав. складом.
Обращаться: Чебоксары, Калинина, 6. Тел. № 7-93. 5—4.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 698 ... ления полиграфпромышленности при Гор. Чебоксары, типография № 1 УправСНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п: м